26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
АВГУСТ
31
ЫТЛАРИКУН
173(6410) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

ГЕНЕРАЛ-ПОЛКОВНИКА ТОЛБУХИНА

Кăнтăр фронтĕнчи войскăсем хаяр çапăçусем хыççăн нимĕçсен Таганрог патĕнчи группировкине çĕмĕрсе тăкрĕç те, паян августăн 30-мĕшĕнче **Таганрог** хулине йышăнса илчĕç.

Çак çĕнĕ çĕнтерĕве пирĕн войскăсем кăнтăрта унти утлă тата механизированнăй соединенисен хăюллă маневрне пула тунă, çав соединенисем тăшман войскисен тылне шăтарса кĕрсе кайнă пулнă.

Çак операцие пула пирĕн войскăсем Ростов облаçне пĕтĕмпех нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларчĕç.

Ростов облаçне тата **Таганрог** хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче гварди генерал-лейтенанчĕ **Кириченко** ертсе пыракан Кубань казакĕсем-кавалеристсем, танковăй войскăсен гварди генерал-лейтенанчĕ **Танасчишин** ертсе пыракан танкист-сталинградецсем, **Цветаев** генерал-лейтенантăн, **Захаров** генерал-лейтенантăн, **Герасименко** генерал-лейтенантăн, **Хоменко** генерал-лейтенантăн войскисем тата авиаци генерал-лейтенанчĕн **Хрюкинăн** летчикĕсем уйрăмах палăрнă.

Ростов облаçĕпе **Таганрог** хулине ирĕке кăларнине палăртас майпа çак дивизисене „Таганрогски" ят парас:

130-мĕш стрелковăй дивизие,

азербайджанецсенчен тăракан 416-мĕш стрелковăй дивизие тата вăл дивизисене малашне çапла чĕнмелле тăвас:

130-мĕш Таганрогски стрелковăй дивизи,

416-мĕш Таганрогски стрелковăй дивизи.

Таганрог патĕнче çĕнтерÿ тунă ятпа паян августăн 30-мĕшĕнче 19 сехет те 30 минутăра пирĕн Тăван çĕршывăн столици Мускав Ростов облаçне тата **Таганрог** хулине ирĕке кăларакан, хамăрăн паттăр войскăсене—çĕр çирĕм тăватă тупăран вуникĕ хут пĕр харăс пенипе салют парать.

Çапăçура отлично кĕрешнĕшĕн Эсир ертсе пыракан мĕнпур войскăсене, Ростов облаçĕпе **Таганрог** хулине ирĕке кăларассишĕн пынă кĕрешĕве хутшăннăскерсене, тата чи малтан çаксене тав тăватăп:

Сычев полковникăн 130-мĕш Таганрогски стрелковăй дивизине,

Сызранов полковникăн 416-мĕш Таганрогски стрелковăй дивизине,

Татиров майорăн 15-мĕш механизированнăй бригадине,

Жидков подполковникăн 6-мĕш гвардейски танковăй бригадине,

Гриневич полковникăн 32-мĕш гвардейски танковăй бригадине,

Епаншин подполковникăн 4-мĕш механизированнăй бригадине,

Тутаринов генерал-майорăн 9-мĕш гвардейски Кубански кавалерийски дивизине,

Головский генерал-майорăн 30-мĕш кавалери дивизине,

Утвенко генерал-майорăн 31-мĕш гвардейски стрелковăй корпусне,

Саксеев полковникăн 1-мĕш çирĕплетнĕ районĕн пулеметпа артиллерин гвардейски батальонĕсене,

Алексеев полковникăн 2-мĕш гвардейски артиллери дивизине,

Кудряшев полковникăн 236-мĕш истребительнăй авиаци дивизине,

Чучев полковникăн 270-мĕш бомбардировочнăй авиаци дивизине,

Морозов подполковникăн 9-мĕш гвардейски истребительнăй авиаци полкне,

Еремин майорăн 31-мĕш гвардейски истребительнăй авиаци полкне.

Пирĕн Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕшĕн пыракан кĕрешÿре вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç оккупанчĕсене вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1943 çулхи августăн 30-мĕшĕ.

Таганрог хулине ирĕке кăларнă паттăр войскăсене Мускав салют парать

Верховный Главнокомандующин Совет Союз Маршалĕн Сталин юлташăн приказĕ тăрăх, ĕнер, августăн 30-мĕшĕнче, пирĕн тăван çĕршывăн столици Мускав Таганрог хулине ирĕке кăларнă ятпа тата пĕтĕм Ростов облаçне нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларас ĕçе вĕçленĕ ятпа хамăрăн паттăр войскăсене салют панă.

19 сехет те 30 минутăра 124 тупăран пĕрремĕш хут пĕр харăс персе янă, пĕлĕтелле ракетăсем çиçсе хăпарса кайнă. Салют виçĕ минута пынă. Кашни 15 секундăранах персе тăрса 12 хут пĕр харăс пенĕ.

Ростов облаçне тата Таганрог хулине ирĕке кăларакансен ячĕпе пулнă салюта радио тăрăх панă. Ăна Мускавпа пĕрле пĕтĕм çĕршыв итленĕ. (ТАСС.)

Таганрог пирĕн!

Ĕнер радио тепĕр савăнăçлă хыпар пĕлтерчĕ: пирĕн чаплă çарсем августăн 30-мĕшĕнче Таганрог хулине йышăнса илчĕç, пĕтĕм Ростов облаçне нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларчĕç.

Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводри Кинзбургский юлташăн цехĕнчи рабочисем пурте репродуктор умне пухăнчĕç. Юмахри пек улăп-паттăрсене тав туса ура! кăшкăрни нумайччен янăраса тăчĕ. Çĕрлехи сменăна пынă рабочисемпе работницăсем, хăйсен станокĕсем умне тăрса, ик-виçĕ хут ытларах вăй хурса ĕçлеме тытăнчĕç.

Чăваш республикинчи колхозсенче 1943 çулта кĕрхи çĕртме тăвасси çинчен

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ йышăннă постановлени

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ райсовет исполкомĕсене, ВКП(б) райкомĕсене, колхозсен правленийĕсене, МТС-семпе совхозсен директорĕсене çакăн çинчен аса илтереççĕ: кашни колхозпа совхозра кĕрхи çĕртмене вăхăтра тата пысăк пахалăхпа туса ирттерни ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне ÿстерес ĕçре питех те пысăк вырăн йышăнса тăрать, çакă вăл çуркунне туртăм вăйĕпе тракторсен хирти ĕçне çăмăллатать, 1944 çулхи çуракине çĕр типеччен, иртерех туса хăварма май парать. Çапла, Сăмахран, Вăрнар, Шăхасан, Елчĕк, Етĕрне тата Шупашкар районĕсенчи колхозсем 1942 çулта кĕрхи çĕртме тумалли плана ытти районсенчи колхозсенчен чылай лайăхрах пурнăçа кĕртрĕç, кăçалхи çуракине те вĕсем çавăнпа вара кĕскерех сроксенче туса ирттерме пултарчĕç, тыр-пулсен тухăçлăхне чылай ÿстерчĕç. Çуракине ăнăçлăн ирттерес тата тырпулсен тухăçлăхне ÿстерес ĕçре кĕрхи çĕртме туни мĕнле пысăк вырăн йышăнса тăнине тĕрĕс ăнланса илсе, республикăри малта пыракан колхозсем кĕрхи çĕртме тума кăçал та вăхăтра тытăнчĕç. Сăмахран, Тăвай районĕнчи колхозсем кĕрхи çĕртмене 455 гектар, Канаш районĕнчи колхозсем—455 гектар, Çĕрпÿ районĕнчи колхозсем—240 гектар сухаланă та ĕнтĕ.

Çакăнпа пĕрлех нумай райисполкомсемпе ВКП(б) райкомĕсем, МТС директорĕсемпе колхоз правленийĕсем кĕрхи çĕртмене вăхăтра тата пысăк пахалăхпа туса хăварассине хакламасăр тăраççĕ, çак питех те паха ĕçе кая хăвараççĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ **çапла йышăнаççĕ:**

1. Райисполкомсене, ВКП(б) райкомĕсене, МТС-семпе совхозсен директорĕсене, колхозсен правленийĕсене кĕрхи çĕртме тăвассине халех тытăнма тата çирĕплетнĕ плансене пĕр сăмахсăр пурнăçа кĕртме хушас.

2. Кĕрхи çĕртме тăвас тĕлĕшпе районсем тăрăх панă пилĕккунлăх заданисене çирĕплетес.

Райисполкомсен председателĕсене, ВКП(б) райкомĕсен секретарĕсене тата МТС-сен директорĕсене кĕрхи çĕртме тумалли пилĕккунлăх заданисене колхозсемпе совхозсем, трактор бригадисем патне виçĕ кунлăх срокра çитерме тата вĕсене мĕнле пурнăçа кĕртсе пынине куллен контрольлесе тăма хушас.

3. Кĕрхи çĕртме сухине ăшăх сухалама чарас. Кĕрхи çĕртмене 18—20 сантиметртан ăшăх мар сухаламалла. Сухалакан тăпра сийĕ ăшăх çĕрте кăна 18 сантиметртан ăшăхрах сухалама юрать, анчах çак ĕçе кашнинчех райçĕрĕç пайĕн е МТС-ăн агрономĕ ирĕк панипе кăна тумалла. Техникăллă культурăсемпе çĕрулми лартма палăртакан çĕр лаптăкĕсем çинче кĕрхи çĕртмене иртерехри сроксенче туса хăвармалла.

Кĕрхи çĕртме пахалăхĕшĕн ответлă пулассине район тăрăх—райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ, старши агрономĕ тата МТС директорĕ çине, колхоз тăрăх вара—колхоз председателĕ çине хурас.

4. Кĕрхи çĕртме тăвас ĕçе çăмăллатас тата улăма сыхласа хăварас шутпа, кĕрхи çĕртме тумалли уйхирсене вăхăтра тасатса çитермелле.

5. Райисполкомсемпе ВКП(б) райкомĕсене, райçĕрĕç пайĕн заведующийĕсене, МТС-сен директорĕсемпе колхозсен председателĕсене кĕрхи çĕртме тумалли çĕр çине мĕнпур пухăннă тислĕке тата ытти тĕрлĕ вырăнти удобренисене турттарассине организацилеме хушас. Çак ĕçре колхозсемпе колхозниксен кÿлме вĕрентнĕ ĕне выльăхĕсемпе анлăн усă курмалла.

6. Кĕрхи çĕртме тунă çĕрте кашни лаша пуçне мĕн чухлĕ гектар тивнине районсем тăрăх сезонлă нормăсем туса çирĕплетес. Райисполкомсемпе ВКП(б) райкомĕсене кĕрхи çĕртме тунă çĕрте кашни лаша пуçне мĕн чухлĕ тивнине кашни колхоза сезонлă ĕç нормисем туса пама хушас.

Райисполкомсен председателĕсемпе ВКП(б) райкомĕсен секретарĕсене, колхозсен правленийĕсемпе пĕрле, кашни колхозра кĕрхи çĕртме тунă çĕре халех мĕн чухлĕ лаша куçарма май пуррине палăртса тухма хушас.

7. Кĕрхи çĕртме тунă çĕрте ĕç тухăçлăхне ÿстерес шутпа, лашасене сменăсем тăрăх улăштарса ĕçлеттерес меслетпе анлăн усă курмалла, çавăн пекех тата мĕнпур плугсем валли лайăх хăйраса хатĕрленĕ плут кассисем запаслăх тупса хумалла.

8. Кĕрхи çĕртме тумалли сезонлă нормăсене пурнăçа кĕртнĕ колхозниксене 10 ĕçкунĕ чухлĕ премисем шутласа пама тата сезонри нормăсене ирттерсе тултарнă чухне сезонлă нормăран ирттерсе сухаланă кашни гектаршăн ĕçкунĕсем икĕ хут ÿстерсе шутласа пама колхозсене сĕнес.

9. МТС директорĕсене авăн çапассинчен, комбайнсемпе тырă вырассинчен тата кĕракинчен пушаннă тракторсене пурне те кĕрхи çĕртме тунă çĕре куçарма хушас. Нумай МТС-сенче чылай тракторсем тĕрлĕ çитменлĕхсем пур пирки ĕçлемесĕр тăнине шута илсе, МТС-сен директорĕсене юсавлă мар тракторсене халех юсаса кĕрхи çĕртме тунă çĕре куçарма хушас.

ВКП(б) райкомĕсен секретарĕсемпе МТС-сен директорĕсене тракторсемпе çĕрлехи сменăсенче усă курас ĕç çине уйрăмах тимлĕн çаврăнса пăхма хушас, çавна май тракторсем çĕрлехи вăхăтра мĕнле ĕçленине куллен тĕрĕслесе тăмалла.

10. Кĕрхи çĕртме тунă çĕрте сезонлă нормăсене тултармашкăн трактористсене хавхалантарас шутпа, хăйсен сезонлă нормине, çемçе суха çине куçарса шутласан, октябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне пурнăçа кĕртнĕ трактористсене çакăн чухлĕ хушса тÿлемелле тăвас СХТЗ тракторпа — 60 гектар, СХТЗ—НАТИ тракторпа — 100 гектар, ЧТЗ тракторпа—140 гектар, газогенераторнăй СХТЗ—НАТИ тракторпа—90 гектар, газогенераторнăй ЧТЗ тракторпа—130 гектар сухаланă пулсан, МТС-ра 60 ĕçкунĕ чухлĕ преми, совхозран вара—унчченхи уйăхра шутласа панă пĕр уйăхлăх ĕçукçи чухлĕ преми памалла.

Сезонлă нормăна ирттерсе тултарсан, нормăран ирттерсе сухаланă кĕрхи çĕртмен кашни гектарĕшĕн трактористсене МТС-сенче — ĕçкунĕсем 1,5 хут ÿстерсе, совхозсенчи трактористсене вара — тунă расценкăсенчен 1,5 хут ÿстерсе тÿлемелле.

11. Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ—çĕрĕç органĕсен хăшпĕр руководителĕсем, хăшпĕр райисполкомсемпе ВКП(б) райкомĕсем хура çĕртме тăвассине хакламасăр тăнине пачах та тĕрĕс мар тесе шутлаççĕ. Çав питех те паха ĕçе хакламасăр тăнине пула республикăри нумай колхозсенче хура çĕртмене пачах та çителĕксĕр туса пыраççĕ. Райисполкомсемпе ВКП(б) райкомĕсене, райçĕрĕç пайĕсен заведующийĕсене, МТС-сен директорĕсемпе колхозсен правленийĕсене, кĕрхи çĕртме тунипе пĕрлех, хура çĕртме тăвассине те организацилеме хушас. Çак ĕçе ăна 1944 çулта çĕртме тумалли çĕр лаптăкĕн 20 процентĕнчен кая мар хура çĕртме туса хăварас шутпа организацилемелле.

12. ВКП(б) райкомĕсене кĕрхи çĕртме тумалли заданисене вăхăтра пурнăçлассишĕн тата ирттерсе пурнăçлассишĕн колхозсем хушшинчи, колхозсенче вара уйхир бригадисем, колхозниксем тата трактористсем хушшинчи социализмлă ăмăртăва анлăн организацилеме хушас.

Чăваш АССР Совнаркомĕн Председателĕ А. МАТВЕЕВ.

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн Секретарĕ И. ЧАРЫКОВ.

Вăрмар районĕнчи колхозсем тырă вырса пĕтерчĕç

ВАРМАР, августăн 30-мĕшĕ. (**Телеграфпа**). Ĕнер, августăн 29-мĕшĕнче, районри колхозсем пĕрчĕллĕ тата пăрçа йышши тырăсене вырса пĕтерчĕç, пĕтĕмпе 26.411 гектар тырă вырнă.

ВКП(б) райкомĕн секретарĕ А. СМИРНОВ.

Райсовет исполкомĕн председателĕ БИКТИМИРОВ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

АВГУСТĂН 29-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Августăн 29-мĕшĕнче пирĕн ХАРЬКОВРАН хĕвеланăçнерехре тата кăнтăртарахра наступлени туса пыракан çарсем 6 километртан пуçласа 12 километр таран малалла куçнă, халăх пурăнакан 50 пункта ытла, вăл шутра ЛЮБОТИН хулипе чугун çул узелне, йышăнса илнĕ.

БРЯНСКРАН кăнтăртарахри районра пирĕн çарсем малалла тапăнса пынă, уйрăм участоксенче 7 километртан пуçласа 15 километр таран малалла куçнă, халăх пурăнакан 40 пункта ытла йышăнса илнĕ.

Донбасра, ВОРОШИЛОВГРАДРАН кăнтăр-хĕвеланăçнерехри районра, пирĕн çарсем ăнăçлăн малалла куçса пынă.

Фронтăн ытти участокĕсенче пирĕн çарсем çапăçса разведка тунă.

Августăн 28-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 110 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 82 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Харьковран хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çаплах малалла тапăнса пынă, халăх пурăнакан чылай пункта, вăл шутра Люботин хулипе чугун çул узелне, йышăнса илнĕ. Пĕр соединени боецĕсем пĕр кун хушшинче нимĕçсен 600 салтакĕпе офицерне тата 14 танкне пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра совет чăçĕсем 12 километр малалла куçнă, вăйлă çирĕплетнĕ виçĕ пункта илнĕ. Тăшмана çынсем тĕлĕшпе те, техника енĕпе те пысăк çухатусем кÿнĕ.

Харьковран кăнтăртарахра пирĕн çарсем тăшман оборонине татса кĕнĕ те, малалла куçса пырса, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Çав пунктсемшĕн пынă çапăçусенче пĕр соединени чăçĕсем 4.200 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă, 18 танк персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă, 24 тупă пĕтерсе тăкнă, трофейăсем тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

Пирĕн летчиксем сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 15 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Брянскран кăнтăртарахра пирĕн çарсем çаплах малалла тапăнса пынă, халăх пурăнакан 40 пункта ытла йышăнса илнĕ.

Севск хулинчен хĕвеланăçнерехре пĕр соединени чăçĕсем тăшманăн умлăн-хыçлăн тунă сакăр контратакине сирсе янă. Çав çапăçусенче 1000 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă. Тăшмана халран янă хыççăн пирĕн çарсем нимĕçсене атакăланă та, малалла куçса, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. 22 тупă, 90 пулемет, 500 автомат, 5 продовольстви склачĕ тата боеприпассен 3 складне тытса илнĕ.

Севск хулинчен кăнтăртарахра совет çарĕсем ăнăçлăн малалла тапăнса пынă, халăх пурăнакан 16 пункта йышăнса илнĕ. Пĕр чăçри боецсем хаяр çапăçусем хыççăн тăшманăн вăйлă çирĕплетнĕ оборона рубежне тытса илнĕ. Çав рубежа тытса илесшĕн пынă çапăçусенче 400 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă. Кÿршĕри участокра нимĕçсен пĕр роти, хăйсен хĕçпăшалне пăрахса, тыткăна парăннă.

Совет летчикĕсемпе зенитчикĕсем кун каçиччен тăшманăн 34 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Змиев хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем малалла куçса пынă, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Нимĕçсем, хушăри рубежсенче чарăна-чарăна, вăйлăн персе хирĕç тăнă, темиçе хутчен контратака тунă. Пирĕн чăçсем тăшман контратакисене сирсе янă, гитлеровецсене пĕр батальонран кая мар пĕтерсе тăкнă. Совет бронебойщикĕсемпе артиллерисчĕсем нимĕçсен 22 танкĕпе 3 бронемашинине персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. Тăшмантан 17 тупă тата боеприпассен складне тытса илнĕ.

* * *

Донбасра, Ворошиловградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре, пĕр соединени чăçĕсем, малалла куçса пырса, тăшманăн çыннисемпе техникине аркатаççĕ. Туллимар даннăйсем тăрăх, совет боецĕсем тăшманăн 2000 салтакĕпе офицерне ытла вĕлерсе тăкнă, 26 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă, 26 тупă, 80 автомашина пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем нумай тытса илнĕ. Нумай çынна тыткăна илнĕ. Пĕр участокра пирĕн танкистсем тăшманăн батальон командирĕ ертсе пыракан 127 салтакĕпе офицерне çаврăрса илнĕ те пурне те тыткăна илнĕ.

* * *

Ленинград фронтĕнче пирĕн снайперсем 200 гитлеровеца çити вĕлернĕ. Артиллери тата миномет подразделенийĕсем нимĕçсен 14 дзотне, 3 наблюдательнăй пунктне тата темиçе землянкине ишсе антарнă. Пĕр чăçри разведчиксем çĕрле ăнăçлăн шыраса çÿренĕ, вĕсем нимĕçсен темиçе вунă салтакне пĕтерсе тăкнă тата темиçе çынна тыткăна илнĕ.

* * *

Баренц тинĕсĕнче пирĕн авиаци нимĕçсен пĕтĕмĕшпе 8000 тонна водоизмещениллĕ 2 транспортне тата тăшманăн хуралта çÿрекен карапне шыва путарнă. Сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 6 самолетне персе ÿкернĕ.

Хура тинĕсре совет летчикĕсем тăшманăн 6000 тонна водоизмещениллĕ транспортне тата хуралта çÿрекен карапне шыва путарнă.

Азов тинĕсĕнче пирĕн летчиксем тăшманăн 2 карапне тата пĕр буксирĕпе тепĕр баржине шыва путарнă. 3 катерпа 5 баржăна чылаях сиенленĕ.

* * *

Барановичи облаçĕнче кĕрешекен «Победа» ятлă отрядри партизансем августăн 8-мĕшĕнче шоссе çулĕпе пыракан тăшман колоннине пенĕ, 40 гитлеровеца вĕлернĕ. Граната çыххисем вăркăнтарса, тăшманăн 6 автомашинине пĕтерсе тăкнă. 4 пулемет тата винтовкăсемпе боеприпассем нумай тытса илнĕ. «Октябрь» ятлă отрядри партизансем, минăсем хурса, уйăх хушшинче нимĕçсен фронталла пыракан 8 çар поездне сирпĕнтерсе янă. 6 паровоз, танксем тиенĕ 11 платформа тата çар турттарса пыракан 30 вагон çĕмĕрĕлсе пĕтнĕ.

* * *

Нимĕçсен çар влаçĕсем Гомель облаçĕнчи ялсенче çакăн пек листовка сараççĕ:

«Германи правительстви сирĕн ялти халăха каялла, хăйсен çурчĕсене кĕрсе пурăнма ирĕк парать. Сирĕнтен илме хушнă çу, аш-какай, çăмарта тата тĕштырăпа çĕрулми планĕсене яланах вăхăтра тултарса пырсан, сире лăпкă пурнăç пама сăмах паратпăр, сирĕн ялăр çине малашне пĕр бомба та пăрахмăпăр».

Листовкăна Речица округĕнчи нимĕç комиссарĕ алă пусса пичет хунă.

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсем Белоруссири мирлĕ ялсем çине сывлăшран пырса бомбăсем пăрахаççĕ. Нумай ялсенчи хресченсем, фашистла ирсĕрсенчен хăтăлас тесе, хăйсен çурчĕсене пăрахса хăварса вăрмансене тарса кайнă. Халĕ нимĕçсен çар влаçĕсем, хресченсене хĕрхеннĕ пек пулса, хăйсен тăван ялĕсене таврăнса пурăнма ирĕк параççĕ пулать. Нимĕçсен фашистла оккупанчĕсем мирлĕ ялсем çине бомбăсем пăрахма чарăнаççĕ пулать. Çавăншăн вара хресченсене нимĕç çарĕ валли çĕнĕрен продовольстви пама хушаççĕ. Урăхла каласан, гитлеровецсем хресченсене пĕртен пĕр ирĕк параççĕ, çав ирĕк вăл — нимĕçсемшĕн батрак пулса ĕçлесе выçă вилесси пулса тăрать. Анчах та фашистла ирсĕрсем совет çыннисене нихăçан та хăратса тăкаймĕç. Гитлеровецсен çав тери усал ĕçĕсене хирĕç совет патриочĕсем нимĕç оккупанчĕсемпе тата вăйлăраххăн кĕрешме пуçлĕç.

Пирĕн авиаци Полтава, Волноваха, Рославль чугун çул узелĕсене тата тăшманăн аэродромĕсене тапăнни

Августăн 28-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн авиаци Полтава, Волноваха тата Рославль чугун çул узелĕсене тапăннă. Бомбăсем тÿрремĕнех пырса тивнипе тăшманăн боеприпассем, горючи тата техника тиенĕ темиçе çар эшелонĕ çĕмĕрĕлнĕ. Взрывсем пулнипе пушарсем тухнă. Пушарсем çав чугун çул узелĕсем çинчи нумай состава ярса илнĕ.

Çав каçах пирĕн авиаци тăшманăн темиçе аэродромĕ çине бомбăсем пăрахнă. Нимĕç самолечĕсем тăракан вырăнсенче пушарсем нумай тухнă. Темиçе çĕрте вăйлă взрывсем пулнă.

Боевой заданирен пирĕн икĕ самолет таврăнман.

ТĂВАН ÇĔРШЫВШĂН, МУХТАВЛĂ ХĔРЛĔ ÇАРШĂН, ÇĔНТЕРӲШĔН!

Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозпа „Марс" колхоз хушшинчи социализмлă ăмăрту

Колхозсен пуян уйхирĕсем çинчен куçа илес килмест. Вăрçăн йывăр кунĕсенче ăнса çитĕннĕ тырпула чуна киллентерет. Тирпейлесе вырнă кашни гектар, хирти кашни çĕмел, кĕлет-амбарсене çапса кĕртнĕ, хатĕрлев пунктĕсене леçнĕ кашни тонна тырă кăмăла çĕклет.

Елчĕк хирĕсенче халиччен те тырă начар çитĕнмен. Сăръел, Аслă Пăла Тимеш, ку таврари ытти ялсен ĕçчен çыннисем вăрçăччен те тырпула ӳрĕк-сӳрĕк пухса кĕртмен. Анчах Аслă Пăла тăрăшĕпе сарăлса выртакан хирсем нихăçан та хальхи пек шавлă пулман, вĕсенче нихăçан та ĕç хальхи пек вĕремен.

Вăйпитти арçынсене тăван çĕршыва хӳтĕлеме фронта ăсатнă пулин те, кунти хĕрарăмсемпе çамрăксем, ватăсемпе вăрçă инвалидĕсем кăçал мĕн тери паха тырă çитĕнтернĕ! Вĕсем тем тери сарăлса выртакан хирти тырпула çĕмелсемпе капансене хывса лартнă. Çанталăк час-часах улшăнса тăрать пулин те, совет патриочĕсем тырра çапса пуçтарнă, государствăна леçнĕ!

Тырпулăн кашни кĕлти, кашни пучахĕ, кашни пĕрчи колхозниксемшĕн пуриншĕн те тем пекех паха та тем пекех хаклă. Мĕншĕн тесен ку вăл йăлтах—тăван çĕршывпа фронт валли, çĕнтерӳ валли!

Ӳкерчĕк çинче (сулахайран сылтăмалла): 1) Аслă Пăла Тимешĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозăн итемĕнче капан тăваççĕ, 2) çав колхозри иккĕмĕш бригадăри колхозницăсем авăн çапаççĕ, 3) Сăръелĕнчи «Марс» колхоз активĕ Вăрнар районĕнчи колхозниксен чĕнĕвне сӳтсе явать.

Н. ДАНИЛОВ фотоӳкерчĕкĕ.

1. Çулпуç телеграмми

Сăръелĕнчи «Марс» колхоз çинчен пĕтĕм республикăра ырă ят сарăлнă. Сăръел колхозникĕсене аслă çулпуçăмăр Сталин пĕлет.

Çĕршыв йывăр кунсене тӳссе иртернĕ вăхăтра вĕсем хăйсен нумай çул хушши перекетлесе усранă çур миллион укçине танксен «Колхозник Чувашии» ятлă колоннипе боевой самолетсен «Комсомолец Чувашии» ятлă эскадрильине тума панă, оборона фондне 360 пăт тырă хывнă. Колхозăн пултаруллă руководителĕ—коммунист Абдул Гаязович Гаязов танксем тумашкăн хăй пĕччен 105 пин тенкĕ, Хĕрлĕ Çар фондне 36 пăт тулă панă. Çак пархатарлă ĕçшĕн Сталин юлташ Гаязов юлташа тата унти мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене ăшшăн саламласа Хĕрлĕ Çар ячĕпе тав тунă.

Сталин юлташăн телеграмми «Марс» колхоза шăпах çуракине хĕрӳллĕн хатĕрленнĕ вăхăтра çитнĕ. Аслă çулпуç саламĕпе геройла Хĕрлĕ Çар тав туни кашни колхозникпе колхозницăна хумхантарнă, савăнăç кӳнĕ.

Пуринчен ытла колхоз председателĕ канăçа пĕлмен. Сталин юлташ саламĕпе Хĕрлĕ Çар тав тунине илтме тивĕçлĕ пулнă хыççăн, çак патриот-колхоза ертсе пыракан Абдул Гаязовăн чĕри ăçтан-ха лăпкăн тапма пултартăр?

Çуракине иртерме пурте çителĕклех, пурте хатĕрех, çитменнине çураки иртересси—уншăн çĕнĕ ĕç те мар. 13 çул хушши пĕр вĕçĕмсĕр çак колхозăн председателĕнче ĕçлесе, Гаязов çураки сăкăлтăкĕсене витĕрех пĕлсе тăрать. Апла пулин те ăна пĕр шухăш канăç памасть — ытти колхозсем çуракине хăвăртрах туса иртерсен, вĕсем вара: «сăръелсем çулпуç саламĕпе лăпланса ларнă», тейĕç. Çуракине кăтартуллăн иртерсе, тырпулсене чи кĕске срокра пухса кĕртсе, государство умĕнчи парăмсене срокчен таттса каллех Сталин юлташ тав тунине тивĕçлĕ пуласчĕ!

«Марс» колхоз—районри кăтартуллă колхоз. Колхоз чапĕпе пĕрле унăн руководителĕн Абдул Гаязовăн чапĕ те пĕтĕм района сарăлнă. «Марс» колхоз çинчен сăмах пуçарсанах Гаязов çине куçаççĕ. Кирек камран ыйт, сана тӳрех: пирĕн чи пуян колхоз—Гаязов колхозĕ, теççĕ.

«Марс» колхозра çулсеренех ĕç кунĕсем çине тырă чылай валеçĕнет. Вăл районри ытти колхозсем хушшинче чаплă хуралтăсемпе, выльăх-чĕрлĕх витисемпе, лайăх транспорт инвентарĕсемпе, мăнтăр лашасемпе, кӳлмелли çыпçулли та тӳсĕмлĕ хатĕрсемпе, пуринчен ытла—çирĕп ĕç дисциплинипе палăрса тăрать.

«Марс» колхоз—Аслă Пăла таврашĕнчи кашни колхозшăн паха пример. Кашниех çак колхоз пек ĕçлеме, унпа танлашма тăрăшать.

Тăван колхозăн чысне малашне те çӳлте тытас шухăш-кăмăл кашнинех ырми-канми ĕçлеме вăй-хал хушса панă.

«Марс» колхоз членĕсем тырпулшăн пынă кĕрешӳвĕн малтанхи тапхăрĕнче хăйсен сăмахне чыслăн пурнăçа кĕртрĕç. Вăсем Май уявĕ ыран тенĕ чух çураки пĕтерсе таврăнчĕç.

2. Ăмăрту хăвачĕ

Районри колхозсен ăмăртăвĕн малтанхи итогĕсене тунă хыççăн, «Марс» колхоза ВКП(б) райкомĕпе райсовет исполкомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне панă. Çав кун—кашни колхозшăн паллă та асран тухми кун пулчĕ. Пур колхозсенчи колхозниксем те хăйсен ĕçне районри малти вырăна йышăннă сăръелсен ĕçĕпе танлаштарса пăхрĕç. Çывăхри Аслă Пăла Тимеш колхозĕ çуракине районри пур колхозсенчен те малтан—апрелĕн 28-мĕшĕнче вĕçленĕ. Анчах райхаçатри Хисеп хăми çине мĕншĕн «Марс» колхоза маларах кĕртнĕ-ха тата Хĕрлĕ ялава мĕншĕн сăръелсене панă-ха?

Çак ыйту Тимешри Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз председательне Василий Васильевич Зайцева çеç мар, унти кашни бригадира, колхозникпе колхозницăна шухăшлаттарнă. Пуринчен ытла Люлин Моисейăн бригадинчи колхозниксем кăмăлсăрланнă: ара вĕсем çуракине 5 кун хушшинчех вĕçленĕ-çке!

Тимешре çак ыйтупа ятарласа пуху иртернĕ. Унта пуринчен ытла çитменлĕхсем çинчен калаçнă. Хăшпĕр колхозниксем «Марс» колхозри çитменлĕхсене палăртса хăварма та имсĕсех тăман. Вĕсем:

— Пирĕн колхозра сысна ферми чаплă, сăръелсен сысна ферми çук. Хĕрлĕ ялава панă чухне çакна мĕншĕн шута илмен-ха. — тесе ӳпкелешнĕ.

Тимешсем çав пухура уборкăра сăръелсенчен лайăхрах ĕçлесе, вĕсенчен Хĕрлĕ ялава туртса илме шухăш тытнă.

Ворошилов ячĕпе тăракан колхозăн чапĕ юлашки икĕ çул хушшинче, ăна Зайцев ертсе пыма тытăннă хыççăн çеç палăрма пуçланă. Ку колхоз халиччен ялхуçалăхĕнчи чылай ĕçсем енĕпе юлса пынă.

Зайцев фронтран таврăннă хыççăн ăна тепĕр куннех колхоз председательне суйласа лартнă. Вăл, вăрçа кайиччен уйĕç бригадирĕнче ĕçленĕскер, колхоз мĕншĕн сӳрĕк ĕçленине витĕр пĕлсе тăнă. Ĕç дисциплини сӳрĕкки, колхозра тивĕçлĕ йĕрке пулманни тата ун умĕнхи председатель хăйшĕн ытларах тăрăшни,—акă мĕн чăрмантарнă колхоза. Зайцев, суранĕ тӳрленсе çитмен пулин те, колхоза ура çине тăратассишĕн фронтри пек хастарлăхпа ĕçлеме пуçланă. Халĕ çак колхоз тăван çĕршывпа фронт умĕнчи тивĕçлĕхе чыслăн пурнăçа кĕртессишĕн—фронтпа çĕршыва тырпул, аш-какай, пахча-çимĕç, промышленноçа—чĕртавар йĕркеллĕ те вăхăтра тăратассишĕн районри малта пыракан «Марс» колхозпа пĕтĕм чун хавалĕпе ăмăртать.

Уборкăна хатĕрленнĕ вăхăтра Аслă Пăла Тимеше фронтран çыру килнĕ. Ăна Елена Константинова стахановкăн упăшки çырнă. Вăл фронтри хыпарсене пĕлтернипе пĕрлех, тăван ял-йышсене тăшмана çĕнтерессишĕн çине тăрса кĕрешме чĕннĕ. «Эпир кунта тăшмана аркатса тăкмаллах пырса çапма хатĕрленетпĕр,—тенĕ вăл,—эсир колхозра мĕнле ĕçлетĕр?»

Колхоз председателĕ Василий Васильевич, комсомол организацин секретарĕ Валя Сорокина, ялсовет исполкомĕн председателĕ Александр Николаевич Овчинников, ялти учительсемпе агитаторсем фронтовиксен çырăвĕсене колхозницăсене вула-вула кăтартнă. Фронтри юлташсем умĕнче парăмлă пулмастпăр,—сăмах панă колхозниксемпе колхозницăсем.

Сăмах патăн—ăна пурнăçа кĕрт. Уборка—сăрт хыçĕнче мар. Анчах уборкăна хатĕрленес тĕлĕшпе тумалли ĕçсен вĕçĕ-хĕрри те курăнман.

Колхоз уборка ĕçĕсен планне питех те тĕплĕн шутласа тунă. Ĕçлеме пултаракан кашни колхозникпа колхозница тата ĕçлекенсен шутне кĕреймен кашни çамрăк валлиех уйрăм ĕç палăртса хунă. Кам ăçта усăллăрах—ăна çавăнта ĕçлеме уйăрнă. 56 çулхи мучи Михаил Петрович Портнов—колхозри чаплă конюх. Анчах капан тăвас ĕçре ăна çитекенни никам та çук. Колхоз правленийĕ, çакна шута илсе, ăна капан тума уйăрнă.

Ĕçпе туртăм вăйне вырнаçтарса тухсан, çурласемпе кĕреплеллĕ çавасене, транспорт инвентарĕсене хатĕрлесен, ача яслипе пĕрлешӳллĕ столовăй валли продуктсем тупса çитерсен, колхоз умне пĕр ыйту ытла та çивĕччĕн тухса тăнă. Кашни бригадăрах жнейкăсем пур, анчах машиноведсем çук.

Фронтран таврăннă Петр Алексеев, сывалса çитмен пулин те, жнейкăпа тырă вырма кăмăл тунă. Унăн сăмахĕсем малтанлăха правлени членĕсене кулăшла пек туйăннă. Ара, ăна колхозра пурте лайăх пĕлеççĕ-çке: вăл нихăçан та жнейкăпа тырă вырса курман, конюхра ĕçленĕ.

— Шӳтлесе мар, чăнахах,—татса каланă Алексеев.

Тепĕр кунне ирех вăл тимĕрçĕ лаççине аннă. Колхоз тимĕрçи Феоктист Портнов, лаççа Алексеев мĕншĕн килнине пĕлсех пулас, ăна тӳрех ĕç сĕннĕ.

Çавăн хыççăн тимĕрçĕ лаççинче иртен пуçласа хĕвел аничченех ĕç вĕресе тăчĕ. Алексеев, ултă машиновед тимĕрçĕпе пĕрле кашниех хăйсен жнейкисене юсарĕç. Жнейкăн кашни пайне темиçе хутчен те салата-салата вырнаçтарса лартрĕç, нумай тертленчĕç, тар юхтарчĕç. Анчах вĕсем колхозăн çичĕ жнейкине юсаса лартрĕç-лартрĕçех. Машиноведсем пулмэ та хатĕрленсе çитрĕç.

Ашă çил вĕрнипе хирти тырă тинĕс евĕр хумханнă. Шултăра та йывăр пучахлă ыраш ял çыннисене хире йыхăрнă.

Кĕçех Моисей Люлинăн бригади уйрăм участоксенчи ыраша суйласа вырма пуçланă. Тепĕр куннех ялта пĕр пушă çӳрекен çын та юлман: лаша пĕкки çӳллĕш хĕвĕшсе çитĕннĕ тырра хăшĕ кĕреплеллĕ çавапа, хăшĕ жнейкăпа, чылайĕшĕ — çурласемпе вырса пуçтарнă.

Ирина Портновăпа Анастасия Горшкова малтанхи кунсенчех хăйсен ĕçченлĕхне кăтартрĕç. Çурлапа 0,18-шар гектар выраcси—вĕсемшĕн çĕнĕ япала мар, жнейкăпа вырнă хыççăн 0,80-шар гектар çинче кĕлте çыхма та ĕлкĕреççĕ. Фронтовик арăмĕ Елена Константинова икĕ норма тултарать.

— Пĕр норми—фронтри упăшкамшăн пултăр,—тет вăл.

Петр Алексеев та ĕçе часах хăнăхрĕ. Чăнах, малтанхи икĕ кун хушшинче темĕн чухлĕ тăрăшсан та жнейкăна йĕркеллĕн ĕçлеттерейменрĕ вăл. Кайран вара, талăкра 20—21 сехет ĕçлесе, 3,5 гектар вырăнне тăтăшах 6-шар гектар вырчĕ.

Иккĕмĕш бригада ыраша 6 кун хушшинче вырса пĕтерчĕ. Маттур бригада, хастар бригадир! Ахальтен мар колхозницăсем хăйсен бригадирне çапла мухтаççĕ: пирĕн Моисей Егорча сăмаха çилпе вĕçтерме юратмасть. Каларĕ çуракине 6 кун хушшинче вĕçлетпĕр тесе,—5 кун хушшинче туса иртертĕмĕр. Каларĕ ыраша эрне хушшинче вырса пуçтаратпăр тесе,—ултă кунра вырса пĕтертĕмĕр. Çуртыррисене те 7—8 кун хушшинче вырса пуçтаратпăр терĕ,—пуçтартăмăр!

Ӳкерчĕк çинче: Сăръелĕнчи «Марс» колхоз председателĕ А. Г. Гаязов юлташ (сулахайри) тата Аслă Пăла Тимешĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз председателĕ В. В. Зайцев юлташ.

Н. ДАНИЛОВ фотоӳкерчĕкĕ.

Çурхи тырăсене вырас ĕç пуçлансан, кĕтмен çĕртен, çанталăк пăсăлчĕ. Çумăр çуман вăхăтăн кашни сехечĕпе усă курма пĕлмелле. Çав мастерлăх Георгий Емельянов ертсе пыракан 3-мĕш бригадăн ытларах пулчĕ. Çавна пула 3-мĕш бригада 2-мĕш бригадăран иртсе кайрĕ.

Анчах Моисей Егоровичпа унăн колхозникĕсем малти вырăна ыттисене парĕç-и? Çук, вăл пулмĕ! Кăнтăрлахи апат вăхăтĕнче хире çĕнĕ хаçатсем килсе çитрĕç. Савăнăçлă хыпар: Хĕрлĕ Çар Орелпа Белгород хулисене ирĕке кăларнă! Совет войскисем нимĕçсене пĕр чарăнмасăр Хĕвеланăçнелле хĕссе пыраççĕ. Паттăр войскăсене Совет Союзĕн хĕçпăшаллă вăйĕсен пуçлăхĕ Сталин юлташ саламланă. Çулпуç приказĕ Тимеш колхозникĕсемпе колхозницисене çĕнĕ вăй-хăват хушса пачĕ. Кашнин питĕнче тулли савăнăç талăрать.

Тавçăруллă бригадир, патриотла шухăш-туйăмсене сиссе, колхозницăсемпе питех те сывăххăн калаçса илме шутларĕ:

— 3-мĕш бригада тепĕр икă-виç кунран мĕнпур тырăсене вырса пуçтарать,—терĕ вăл.—Капла ĕçлесен эпир кая юлатпăр, Хĕрлĕ ялава хамăр аларан вĕçертетпĕр, намăс куратпăр...

— Тĕрĕс,—тенĕ темиçе сасă,—çĕрле вырас та, 3-мĕш бригадăна хăваласа çитес...

Çав кун 2-мĕш бригада хиртен сĕм тĕттĕм пулсан çеç таврăнчĕ. Питех те васкаса каçхи апат тунă хыççăн, Люлин бригадинчи ачасăр хĕрарăмсемпе хĕрупраçсем каллех хире туха-туха утрĕç, çакна 3-мĕш бригадăрисем сисеймерĕç...

Тӳлек те уяр каç. Каçхи çил ял енчен анчăк вĕрнĕ сасса илсе килет. 2-мĕш бригада колхозницисем каç сулхăнĕпе хĕрсех сĕлĕ выраççĕ.

— Халĕ ĕнтĕ пире кая хăвараймăр, Емельянов бригадинчи колхозницăсем,—тесе шӳтлесе илет пĕр вăтам пӳллĕ хĕр,—эсир пĕркун пирĕн жнейка çĕмĕрĕлсен çăмăллăн сывласа янăччĕ-ха...

Малти вырăна тухас килни тем тутарĕ! Иккĕмĕш бригадăри 35 колхозница икĕ талăк хиртен яла таврăнмарĕç. Уйăх çутипе ĕçле-ĕçле, вĕсем çуртыррисене пур бригадăсенчен те маларах вырса пĕтерчĕ.

Аслă Пăла Тимешĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз, çапла майсемпе ĕçлесе, августăн 12-мĕшĕнче районра чи малтан мĕнпур тырра вырса çĕмелсем туса лартрĕ.

Халĕ ĕнтĕ фронтовиксене Моисей Люлинăн стахановла бригади çинчен, колхозри чи паллă стахановкăсем Ксения Викторовăпа Агрипина Табакова çурлапа 0,18—0,20-шер гектар вырни çинчен, вĕсем машина вырнă хыççăн 0,75—0,80-шер гектар кĕлте çыхни, виçĕ фронтовикăн ашшĕ Михаил Петрович Портнов куллен 50—60 урапа тыррине капана хывни çинчен хăюллăнах çырса пĕлтерме пулать.

Фронтра паттăррăн çапăçса медальсем илнĕ Сапожниковпа Ахматов, Тимешрен фронта кайнă ытти юлташсем, эсир окопри хăвăрăн юлташăрсем хушшинче савăнма пултаратăр: сирĕн колхоз тырпулсене пухса кĕртес енĕпе кăçал районри пур колхозсенчен те лайăххрах ĕçлерĕ. Вăл кăçал выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана пур енĕпе те иртерсе пурнăçларĕ, çĕнĕ витесем туса лартма та ĕлкĕрчĕ. Сĕт-çу памалли обязательствăсене июнĕн 15-мĕшĕнчех пурнăçларĕ, çитес çулшăн аванс шучĕпе 3.000 литр сĕт пачĕ. Государствăна аш-какай памалли плана тултарчĕ те 1944 çулшăн 3 центнер какай аванс шучĕпе парса хучĕ. Тахçанах çăм парса татнă.

3. Çулпуçа кам маларах рапорт парĕ?

Сăръел колхозникĕсем те çурхи мĕнпур тырăсене вырса пуçтарчĕç. Комсомолка Фатиме Хасьянова бригади тырă вырса пĕтернĕренпе эрне иртрĕ ĕнтĕ.

Колхозра уборка вăхăтĕнче вуншар стахановец палăрчĕ. 16 çулхи Талхат Салахеев, унăн ашшĕ — 60 çула çитнĕ Бурган Салахеев жнейкăпа ултă кун хушши пĕр чарăнмасăр ĕçлерĕç. Фасхутдинова Марьям, Эмирова Садире тата Галиева, Иднатуллина стахановкăсем жнейка хыççăн 0,45—0,50-шар гектар тыррине çыхса пычĕç. Гаязова Сауде, звеноводка Хасьянова кулленех 55—60-шар çĕмел турĕç.

«Марс» колхозра партипе комсомолăн вăйлă организацийĕсем пур. Коммунистсемпе комсомолецсем—пурте агитаторсем, уборка организаторĕсем пулса тăраççĕ. Акă Юсупов Хак. Вăл комсомола эрне каярах кăна кĕнĕ. Жнейкăпа 5,5—6-шар гектар вырчĕ. Ун пеккисем татах пур.

Халĕ икĕ колхозĕнче те тырра капана хывас, авăн çапас тата государство умĕнчи парăмсене татас ĕçсене хăвăртрах туса çитерессишĕн татăклă кĕрешӳ пырать.

Хĕрлĕ ялав сăрьелсен аллинчех, ăна вĕсем хăйсенчех хăварасшăн кĕрешеççĕ.

Сăръелсен мала тухма лайăх майсем пур: вĕсем августăн 18-мĕшĕ тĕлне хатĕрлев пунктне 1943 çулхи обязательствăсен шучĕпе 421 центнер тырă леçнĕ, натуроплатăшăн 96 центнер тӳленĕ, Хĕрлĕ Çар фондне 120 центнер тырă хывнă. Çăмарта, сĕт-çу обязательствисене йăлтах пурнăçланă.

Вăрнар районĕнчи колхозниксемпе колхозницăсен чĕнĕвне сӳтсе явса, Сăрьел колхозникĕсем сентябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне авăн çапса пĕтерме, сентябрĕн 15-мĕшĕнче государствăна тата Хĕрлĕ Çар фондне тырă парса татма обязательство илнĕ. Тимеш колхозникĕсем те çак ĕçсене çав срокcенчех пурнăçа кĕртме сăмах панă. Çулпуçа хăшĕ маларах рапорт парĕ, халь кĕрешӳ çакăншăн пырать.

Канаша каймалли шоссе çулĕ тăрăх вĕçĕ-хĕррисĕр тырă лавĕсем иртеççĕ. Пĕр йĕркерен 24 лав! Ку вăл—«Марс» колхозăн Белгородски дивизисен ячĕпе организациленĕ хĕрлĕ обозĕ. Малти лав çинче—вăрçă инваличĕ Салимзян Давлятшин.

П. НИКОЛАЕВ (хамăр корр.).

Ют çĕршывсенче

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

Августăн 28-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсем Германин Нюрнберг ятлă хулине хаяррăн тапăннă. Çав хулара танксем, автомобильсем, авиаци валли двигательсем тата ытти вăрçă хатĕрĕсем тăвакан заводсем нумай.

Англи бомбардировщикĕсем Германин Рур облаçĕнчи çар объекчĕсене те тапăннă. Союзниксен самолечĕсен ытти отрячĕсем тăшманăн Францири, Голландири тата Бельгири объекчĕсене тапăннă. (ТАСС).

СОЮЗНИКСЕН ТИНĔС-ÇАР ВАЙĔСЕН ИТАЛИ ШЫВĔСЕМ ÇИНЧИ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, августăн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çурçĕр Африкăри çарĕсен штабĕ пĕлтернĕ тăрăх, Англин тинĕс-çар вăйĕсем августăн 25-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Спаргивенто сăмсахĕнчен 20 мильăна яхăн çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри Лекри патĕнчи чугун çулпа кĕперсене пенĕ. Тăшманăн çыранри батарейисем хирĕç пеме пуçланă, анчах та Англин карапĕсене нимĕнле сиен те тăваймăн. Августăн 25-мĕшĕнче кăнтăрла иртсен Англи крейсерĕ тăшманăн Калабри çыранĕсенчи позицийĕсене пенĕ (Мессина проливĕн кăнтăр çыранĕ патĕнче).

ЕВРОПĂРИ ОККУПАЦИЛЕНĔ ÇĔРШЫВСЕНЧЕ ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ ТĂВАКАН ТИСКЕР ĔÇСЕМ

ЛОНДОН, августăн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Лондонра Европăри оккупациленĕ çĕршывсенче гитлеровецсем тунă преступленисем çинчен даннăйсем пичетлесе кăларнă, вăл даннăйсене хăйсен куçĕпе курнă çынсем каласа панинчен илнĕ, вĕсене Бельги, Чехословаки, Греци тата гитлерла оккупаци пусмăрĕ айĕнче пурăнакан ытти çĕршывсен правительствисен представителĕсем пухнă.

Кашни оккупациленĕ çĕршывра гитлеровецсем çынсене йышлăн арестлеççĕ, асаплантараççĕ, заложник йĕркипе тыта-тыта хупаççĕ, йышлăн вĕлереççĕ, çĕршывран кăларса яраççĕ, ирĕксĕр ĕçлеттереççĕ, концентрациллĕ лагерьсене хупаççĕ. Чехословакири Лидице поселокĕн хăрушă шăпи Польшăпа Югославие те пырса тивнĕ. Польшăра гитлеровецсем хăйсен аллине лекнĕ çынсене газлă камерăсенче вĕлереççĕ, Францире пĕр нимĕçе вĕлернĕшĕн 50—100 заложнике вĕлернĕ.

Гитлеровецсем хăйсем каланă тăрăхах, Гейдрих пуçкасакана вĕлернĕшĕн тавăрас шутпа вĕсем 1.288 чеха асаплантарса вĕлернĕ. Арçынне-хĕрарăмне, çамрăккине-ваттине пăхмасăр, çемьи-çемьипе вĕлернĕ.

Çаратса, тустарса пĕтернĕ Грецире çĕршер пин çын нимĕнле ĕç тума та пултараймиччĕнех халсăрланса çитнĕ.

Югославире Белграда сывлăшран пырса пĕр хĕрхенмесĕр çĕмĕрсе пĕтернинчен пуçланса кайнă террор халĕ те чарăнмасть-ха. Гитлерла авиаци вут тивертекен бомбăсем пăрахать, хуласене пĕтере-пĕтере лартать. Югославири округсенчен пĕринче пĕр уйăх хушшинче 16 пин çынна ытла вĕлернĕ. Нимĕçсем хăйсем каланă тăрăх, вĕсем Кралево хулинче 6000 çынна асаплантарса вĕлернĕ.

Пĕлтерӳсем

Паян, августăн 31-мĕшĕнче, каçхине 7 сехетре, ВКП(б) горкомĕн парткабинетĕнче (Чувашски урам, 6) Сталин юлташăн «Совет Союзĕн Аслă отечественнăй вăрçи çинчен» ятлă кĕнекине вĕренес тĕлĕшпе 1-мĕш тема тăрăх кружоксене ертсе пыракансен семинарĕ пулса иртет.

Тема çакă пулать:

«Оборонăн Государственный Комитечĕн Председателĕ И. В. Сталин юлташ 1941 çулхи июлĕн 3-мĕшĕнче радио тăрăх тухса калани».

Семинара ВКП(б) горкомĕн лекторĕ **Р. С. Давтян** юлташ иртерет.

ВКП(б) горкомĕн парткабинечĕ.

* * *

ВКП(б) горкомĕн парткабинечĕ кашни кунах каçхине, 7 сехетрен пуçласа 10 сехете çитиччен, Сталин юлташăн «Совет Союзĕн Отечественнăй Аслă вăрçи çинчен» ятлă кĕнекине вĕренекенсен пулăшас тĕлĕшпе уйрăм çынсемпе е ушкăнпа консультацисем туса иртерет.

ВКП(б) горкомĕн парткабинечĕ.

Ответлă редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

ШУПАШКАРТИ ПИР-АВĂР ФАБРИКИН ОРС-не çакăн пек работниксем кирлĕ: суту-илӳпе хатĕрлӳ секторĕн начальникĕ, план секторĕн начальникĕ, хатĕрлӳ инспекторĕ, делопроизводитель-машинистка, курьер-уборщица, агентсем, рабочисем, кладовщиксем, уборщица.
Сак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар хули, Володарский урамĕ, Пичет çурчĕ, Шупашкарти пир-авăр фабрикин ОРС-ĕ. 3—2

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, парти пурнăç пайĕн—3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 1818 Типография №1 Управления полиграф. промышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 Ф. б. 53 88 п. а.